**А. Т. ТРОФИМОВ**

76
65302



# БУКВАРЬ

ЧĂВАШГОСИЗДАТ · 1949

ПРОВЕРЕНО
1959

КНИГОХРАНИЛИЩЕ

А. Т. ТРОФИМОВ

4(Ч)чув.
Т-76

# БУКВАРЬ

*Чăваш АССР Çутĕç*
*Министерстви*
*çирĕплетнĕ*

65302
обм. ит.

17-мĕш ИЗДАНИ

Чувашская
Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького

ЧĂВАШ АССР
ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1949

ПРОВЕРЕНО
20 07


ШКУЛ






























































# АН

А   Н







# НА











# Аа

ан

на



Ан–на

Анна



а *а*

*о о о о ı ı ı ı а а а*

*н а на на ан ан*

# У у



Ну!

Ну—ну!



ун

ну





у







Ау, ау!



Уа, у-а.







*а у ау ау уа*



# Ух, ух!

# Хх





| | |
|---|---|
| ух | ха |
| ах | ух |



*х*

*х х х х ах ух*

# Рр





хур　　　хуран

| | | |
|---|---|---|
| хур | ху-ран | ху — ра |
| ху-ра | ху-ра | ху — ран |
| ху-ран | у-ра | |







# Мм



у-рам

хум



ар-ман

Ар-ма-на.
Ан ман.
Ар-ма-на ан.
Раман, ан ман.















Чувашская Республиканская БИБЛИОТЕКА им. М. Горького

# Кк





рак кук-кук

| | |
|---|---|
| рак | кур |
| ку-рак | кун |



**Курак.**

Ак курак.
Ку хура курак.
Хура курак.
Раман, курак кур.

К к

Ак курак

# Тт

 

та-ка          ту-рат

| | | |
|---|---|---|
| ту-та | ту-рат | хут |
| ту-ра | ту-рам | хурт |

Хура така.
Така картара.

| | |
|---|---|
| ту-та | та-ка |
| ту-на | та-кан |
| тук-мак | та-ка-на |



  



# Пп





пу-ра
пу-кан
хап-ха
хуп

пу-кан пу-ра

| | | |
|---|---|---|
| пу-ху | ур-па | ка-пан |
| пу-ра | ура-па | па-так |



Хапха паха.
Хапха хуп.
Урама тух.

Пу — ра
Пу — кан

П

п п пукан

# Сс





су-хан ка-рас

| | | | |
|---|---|---|---|
| су-ха | ка-су | кас | ка-рас |
| су-хан | пу-су | сас | ка-сас |

Ак карас.
Карас кас.

Сахар, сухан пух.
Мана сухан пар.

су — хан, су — ха | ка — су, пу — су





# Ыы





ых-ра
ы-ран

хыр ых-ра

| | | |
|---|---|---|
| хыр | тыт | тат |
| пыр | сыр | кат |

Тарас, хыр кас.
Ура сыр. Армана пыр.
Ыран ыхра пух.

| | | |
|---|---|---|
| хы . | ых . . | ты . |
| пы . | ыра . | та . |







# Шш

ы-раш

аш

| | | |
|---|---|---|
| ку-шак | каш-та | пуш-мак |
| кур-шак | пак-ша | сук-мак |

Ку ыраш.

Таса ыраш.

Таса ыраш акар.







. . па

ку . ак    пак . а








# Лл

шкул
пыл

| | | |
|---|---|---|
| шкул | пыл | ул-ма |
| ла-ша | кул | кал-та |

## Ш к у л.

Шкул таса. Анна шкулта.
Сашук та шкулта.
Анна, мала лар.
Раман, халап кала.






| | | |
|---|---|---|
| ул-ма | пыл | шал-та |
| сал-ма | кул | тул-та |
| са-лам | ху-ла | лут-ра |



## Акара.

Лаша акара.
Ула лаша акара.
Сар лаша та акара.
Хура лаша та акара.
Лука, лашана апат пар.

| | | |
|---|---|---|
| шку . | у . ма | . аша |
| пы . | са . ма | . апка |







## Арман.

Ак арман.

Армана ыраш антар.

Ыраша алама ан ман.

Аласан ыраш таса.

| | | | |
|---|---|---|---|
| пука . | ыра . | арма . | хап . . |
| така . | шку . | Рама . | хала . |

ар
лар
Ра
ман

А

А Анна

# Ăă





пу-лă а-тă

| | | |
|---|---|---|
| у-тă | шă-на | су-рăх |
| ты-рă | хă-на | ту-рăх |
| ты-лă | хă-ма | ку-рăк |

## Тарас.

Тарас пулă тытнă.
Пулă пысăк пулнă.
Аран туртса кăларнă.
Лука ăна пулăшнă.

*ă Ă*

*Лука пулă тытнă.*

Сашук пăшал тунă.
Ак пăшал.



**Раман**



Раман урама тухнă.
Урана атă тăхăннă.
Раман шăнман.
Анна, сăхман тăхăн.
Сăхман ăшă.





су... пу.. п.шал

су — рăх, хăр, хал

пу, су, ху — лă

Анна шăнман.

# Вв



шыв
лав
văр-ман
вă-кăр

## **Вăрман.**

Вăрман аслă. Вăрманта хурăн, ăвăс сахал мар. Унта хурама та пур.

| | |
|---|---|
| сă-вă | вак |
| са-ва | кă-вак |
| са-вăл | кă-вар |



*в в В*

*Шыв тăрă.*

## Павăл.

Павăл сывмар выртнă. Ăна шатра тухнă. Павăла пăхма тухтăр пынă.

Тухтăр ăна урама тухма хушман. Павăл тухман.

Павăл сывалнă.

## Сывлăхлă пул.



Шăла таса тыт.
Аллуна, урӯна
та таса тыт.
Сывлăхлă пул.



са . а    са . ăл    . ăкăр    ла .



# Ии



шă-ши



Иван

| | | | |
|---|---|---|---|
| ир | хир | тир | выр |
| ил | вир | сир | вир |
| иш | пир | кил | хир |

**Кушакпа шăши.**

Кушак шăп выртнă.

Шăши ăна курса савăнса ларнă. Кушак тăнă та ăна тытнă.

*ш*

*Т к К Кушак*

*шăши тытнă.*



## Иванпа Марук.

Марук кушак пулнă.
Иван шăши пулнă.
Кушакăн шăши тыт-
малла.
Шăшин кушакран
тармалла. Марук
Ивана кап тытнă.

*Ш ш*

*Иванпа Марук.*

# Ее





пу-ка-не

се-хет

| | | |
|---|---|---|
| ат-те | ви-те | пар-не |
| ан-не | вит-ре | сер-те |

## Пукане.

Лисукăн пукане пулнă. Пукани хитре пулнă.

Лисук ăна аван пăхнă. Таса тумтир туса панă.









Е-ле-на    пи-леш

| | | |
|---|---|---|
| Е-ле-на | еп-ле | и-лем |
| Ле-на | е-ри-пе | ки-лем |

**Елена.**

Елена сăвă вуланă.
Ира ăна итлесе ларнă.
— Елена, ан васка. Ерипе вула!
Елена аван вуланă.

Е Е Елена сăвă каланă.

# Çç







çăл-тăр    çур-ла    çыр-ла

| | | | |
|---|---|---|---|
| ça-ва | çă-нăх | куç | çар |
| ça-ран | çă-мах | пуç | вăр-çă |

## Çурлапа мăлатук.

Хутран çурлапа мăлатук турăмăр. Тата çăлтăр касса кăлартăмăр.

Çурлапа мăлатука класа çапса хутăмăр.






| | | | |
|---|---|---|---|
| ă-văс | шăл | сă-мах | ка-сă |
| ы-văç | çăл | çă-мах | ка-çă |



| | |
|---|---|
| ăвă . | ка . . |
| ывă . | ка . . |
| . . мах | шă . |
| . . мах | çă . |

## Уçăп.

Канмалли кун пулнă. Уçăп пăшалпа вăрмана уттарнă. Унпа Хураçка пынă.

Уçăп ăсан курнă. Хураçка малта пынă. Ăсан унтан хăраса тарнă. Уçăп киле пушах таврăннă.

*Уçăп ăсан курнă.*

# Ĕĕ





ĕн-е ти-лĕ

| | | | |
|---|---|---|---|
| ти-лĕ | сĕ-лĕ | ĕ-лĕк | тĕ-рĕ |
| ки-лĕ | çĕ-çĕ | çĕ-лĕк | кĕ-рĕ |
| тĕ-рĕ | сĕ-тел | çе-рем | тĕр-лĕ |
| çĕ-рĕ | çĕ-мел | сĕ-рĕм | хĕр-лĕ |

## Ĕне.

Пирĕн хĕрлĕ ĕне пур. Вăл питĕ сĕтлĕ. Пире анне кашни кунах сĕт çитерет. Сĕтрен турăх та тăватпăр.

*Ĕ ĕ*

*Сĕтлĕ ĕне.*

# Чч





чăх-сем ха-чă

| | | |
|---|---|---|
| чă-рăш | ча-как | чĕ-лĕ |
| чă-лан | ча-кан | чĕл-хе |
| чус-та | чĕ-кеç | чĕ-ре |
| ха-чă | ка-ча-ка | чĕр-не |

**Ч ĕ к е ç.**



Чĕкеç, чĕкеç, чĕкеçĕм,
ларса канма пĕлмерĕн,
кунĕпе апат пуçтартăн,
ачусене çитертĕн.









.ăрăш пă . кă ка . ака

*Чĕкеç чĕппи.*



# Ээ

э-реш-мен

| | | | |
|---|---|---|---|
| э-пĕ | э-пир | э-тем | эр-не |
| э-сĕ | э-сир | э-мел | пар-не |

**Шăнапа эрешмен.**

Эрешмен пĕрене хушăкĕнче пытанса ларнă. Пĕр шăна вĕçсе пынă та пĕрене çине ларнă. Унччен те пулман, эрешменĕ сиксе тухнă. Шăна вĕçсе тарнă.

Алăсăр—пир тĕртет.



Мĕн вăл?

| | | |
|---|---|---|
| эр . . | . пир | . тем |
| пар . . | . сир | . мел |






# Автан.

Автан хура ураллӑ, хĕрлĕ çĕлĕклĕ, куçĕсем сиксе тухас пек, сӑмси кукӑр.



Пĕрре эпĕ ун патĕнчен иртсе пыраттӑм. Вӑл çуначĕсене çапрĕ те, çăварне карса: ки-ки-рик! терĕ.

## Автан тус.

Автан тус, автан тус!  
Хĕрлĕ çĕлĕк, ылттӑн пуç.  
Мĕншĕн ытла ир тӑратӑн?  
Мĕншĕн хытӑ кӑшкӑратӑн?  
Мана ирех вӑрататан̆.

---

Автан авӑтрĕ. Тул çутӑлчĕ. Çынсем ĕçе тытӑнчĕç.

*Автан хĕрлĕ çĕлĕклĕ.*



# Йй

йы-тă

| | | | |
|---|---|---|---|
| ка-йăк | йыш | вă-йă | уй |
| хă-йăр | йă-мăк | вăй | пай |

**Кашнин хăйĕн ĕç.**

— Улай, вула-ха, çак кĕнекере мĕн çырнă?



Йытă кĕнекене шăршласа пăхрĕ те уттара пачĕ.

— Ман ĕç мар вăл кĕнеке вулас-си,—тет.—Эпĕ кил-çурт сыхлатăп, çĕрĕпе çывăрмастăп, вĕретĕп, вăрăсене, кашкăрсене хăрататăп,—тет.

*й Й*

*Улай ăслă йытă.*

# Я я





ялав кăсия

| | | |
|---|---|---|
| ял | яр | яв |
| ят | ха-яр | у-яв |
| я-нах | хă-яр | ту-я |

**Якурпа кăсия.**

Якур кăсия тытнă.

Вăл ăна класа илсе пычĕ. Ачасем пурте пыра-пыра пăхрĕç.



Кăсияна эпир читлĕхе хупрăмăр. Эпир ăна апат паратпăр, шыв ĕçтерет-пĕр.

Çуркунне çитсен, эпир кăсияна ирĕке кăларса яратпăр.








ЯС-ЛИ

НЯ-НЯ

| | | | |
|---|---|---|---|
| Ва-ля | Са-ня | вы-ля | а-тя |
| Ва-ня | ня-ня | Ля-ва | а-ча |

## **В а л я.**

Валя пĕчĕк ача. Ирхине ăна амăшĕ яслине леçет. Яслире ачасене аван пăхаççĕ. Тутлă апат çитерессĕ. Унта вăйă, унта кулă.

Яслире няня.

| | | | |
|---|---|---|---|
| Ва.. | Са.. | вы.. | ня.. |
| Ва.. | Ля.. | а.. | а.. |

*Ачасем яслире.*

# Оо



у-рок
пе-ро

| | | |
|---|---|---|
| О-ля | пе-ро | кро-лик |
| Ко-ля | пи-о-нер | у-рок |

## **У р о к.**

Урок пуçланчĕ. Ачасем класра лараççĕ. Пĕрремĕш урокра вĕсем шутларĕç. Иккĕмĕш урокра вуларĕç. Унтан çырма тытăнчĕç. Пурте лайăх çыраççĕ. Переменăра вылярĕç.










пи . нер    пер .    кр . лик



# Зз





ЗВО-НОК

### Колхоз.

Пирĕн колхозăн тырă тулăх. Унăн машинăсем нумай.

Колхозăн лашисем вăйлă. Унта тата ăратлă сыснасем, ĕнесем пур.

### Кроликсем.

Пирĕн колхозăн кроликсем пур. Вĕсен тĕсĕ шурă, çăмĕ мамăк пек çемçе.




Кроликăн ашĕ тутлă.



# Юю



| | |
|---|---|
| ю-ман | юл-таш |
| ю-мах | ют |
| ю-рă | ка-ю |
| юр | хă-ю |

**Ю-рий.** **О-ля.**

Юрий пионер. Оля пионерка. Юрий те, Оля та шкула каяççĕ. Шкулта вĕсем кĕнеке вулаççĕ, шутлаççĕ, çыраççĕ, юрăсем юрлаççĕ.

Юрий юрă юрларĕ. Оля сăвă каларĕ.

| | | |
|---|---|---|
| А-нюк | И-люш | Та-тюк |
| Ва-нюк | Па-люк | На-тюк |




**Юмах юман тăрринче,**
**эп хам сĕтел хушшинче.**







# Ь

су-пăнь

мă-кăнь

| | | |
|---|---|---|
| су-пăнь | Ал-тюк | ву-лать |
| мă-кăнь | Ва-нюк | çы-рать |
| халь | Са-нюк | юр-лать |

## Супăнь.

Ванюка амăшĕ супăнь илсе панă. Вăл питне те, мăйне те супăньпе çунă. Ванюкăн пичĕ те, мăйĕ те, аллисем те тап-таса пулнă.



## Мăкăнь.

Мăкăнь çеçки çурăлсан,
килет пахча илемĕ.
Мăкăнь çеçки тăкăнсан,
каять пахча илемĕ.

Ь

*Мăкăнь çеçки*

| | | | |
|---|---|---|---|
| На-тюк | ти-ха | у-тать | çи-ет |
| Та-тюк | ти-лĕ | чу-пать | си-сет |
| Хве-тюк | ты-лă | тур-тать | сĕ-нет |

## Тихасем.

Колхозăн тиха нумай. Тихасене Хветюк пичче пăхать. Вăл тихасене апат парать, вĕсене шăварать тата хырчăкласа тасатать.



Тихасем Хветюк пиччене палласçĕ. Ăна курсанах кĕçенеççĕ.









т.ха т.лĕ т.лă т.мĕрçĕ

*Хветюк пичче*
*тихасем пăхать.*



## Кĕркунне.

Ăшă çу иртрĕ. Сивĕ кĕр çитрĕ. Кăвак пĕлĕт хупланчĕ. Хĕвел тарса пытанчĕ. Çеçенхир çаралчĕ.

Йĕри-тавра пылчăк. Кайăксем кăнтăр енне вĕçсе кайрĕç.

---



**Хир илемĕ каять,**
**сĕм вăрман çаралать.**
**Пĕрмай çумăр çăвать.**
**Вăл хăçан пулать?**

*Ăшă çу иртрĕ.*



## Хёл çывхарать.

Çанталăк сивётрĕ. Çĕр вăрăмланчĕ. Çырмари пĕвесем шăнса ларчĕç. Çие ăшă тумтир, пуçа çĕлĕк тăхăнма лекет.

Сайра-хутра юр çукалать. Хёл çывхарать.



**Хирсенче юр анчах.**

**Çырмăра пăр анчах.**

**Сивĕтет аванах.**

**Вăл хăçан пулать?**

Лапка-лапка юр çăвать,
Мулкач сикет—йĕр тăвать.

*Хёл çывхарать.*



# ӳ Ӳ



| | кĕ-тӳ | | ӳп-ле |
|---|---|---|---|
| ӳп-ле | сӳ-ре | çӳ-хе | сӳс |
| ӳп-ре | хӳ-ре | çӳ-çе | çӳç |

## К ĕ т ӳ.

Пирĕн колхозăн ĕне кĕтĕвĕ пысăк. Çулла ĕнесем вăрманта е улăхра çӳреççĕ. Шăрăх вăхăтра ĕнесене пăван аптăрататъ. Ун чухне ĕнесене киле хăваласа килеççĕ.

ӳп — ле, ре | хӳ, сӳ — ре

*ӳ Ӳ*

*Кĕтӳ. Улăхра кĕтӳ çӳрет.*

## Кĕтӳ ачи.



Çемçе курăк çийĕнче
путек сурăх сиккелет.
Хăй кĕтĕвĕ патĕнче
ача шăхличĕ калать.
Ырă хĕвел ăшшинче
чĕрипеле савăнать.

## Кампур.



— Кампур, эсĕ ăçта çӳрерĕн, калаха?

— Эпĕ хирте кĕтӳ кĕтрĕм. Ĕнесемпе сурăхсене сыхларăм. Халь киле чупса килтĕм. Сана курнипе хĕпĕртесе тăратăп.

## Выльăхсен сасси.

Ĕне мĕкĕрет. Сысна нĕриклетет.

Лаша кĕçенет. Автан авăтать.

Йытă вĕрет. Кăвакал нартлатать.

**Пӳрт.**



Иванпа Петĕр хăма татăкĕсенчен пӳрт тунă. Пӳрчĕн алăкĕ те, чӳречи те пулнă.

Шала вĕсем сĕтел туса лартнă. Вĕсем ăна юлташĕсене кăтартнă. Пурте савăннă.

**Ю р ă.**

Касрăм, касрăм пĕрене.
Турăм, лартрăм шурă пӳрт.
Шурă пӳртре шур сĕтел.
Сĕтел çинче шур кулач.

---

**Колхоз пӳлми хĕлле те, çулла та тулли.**





# Фф

фер-ма
те-ле-фон

## Ферма.

Пирĕн колхозăн ферма пур. Унта ăратлă сысна пит нумай.

Фермăри сыснасем самăр. Вĕсен çурисем шап-шурă.

Колхозăн сурăх ферми тата ĕне ферми пур. Фермăсен хапхи çине: **ферма** тесе çырнă.








теле . он      . орточка



# Дд





ра-дио

у-да́р-ник | ра́-ди-о

кол-хо́з-ник | за-во́д

ор-ден

**Радио.**

Колхозра ра́дио, шкулта та радио. Пирĕн килте те радио пур.

Радио юрăсем юрласа кăтартать, çĕнĕ хыпарсем пĕлтерет.

**Пĕл.**

Пĕри калаçать, иккĕн итлеççĕ, иккĕн пăхаççĕ. (Чĕлхе,хăлхасем,куçсем.)

*д д Д*

*Пирĕн радио пур.*




# Бб

ра-бó-чи

**Рабóчисем.**

Акă завод. Унта рабóчисем ĕçлеççĕ. Унта мĕн чухлĕ рабочи! Арçынсем, хĕрарăмсем—пурте пĕрле ĕçлеççĕ!

Колхозра колхóзниксем ĕçлеççĕ.

Заводра тата фабрикăра рабочисем ĕçлеççĕ.

Рабочисемпе колхозниксем çирĕп çыхăну тытаççĕ.

*б Б*

*Акă завод. Заводра рабочисем ĕçлеççĕ.*



ав-тó-бус

ав-то-мо-би́ль

## Автобус.

Автóбусĕ пĕр хашкарĕ,
пĕр вĕçтерчĕ çивĕччĕн.
Хула юлчĕ хыçала,
сăртсем хыçне пытанчĕ.

## Автомоби́ль.

Автобуспа автомобиль лашасăрах чупаççĕ. Автомобиль çине те, автобус çине те çынсем ларса çӳреççĕ.



## Сиктермелли урапа.

Сиктермелли урапа, йĕс ӳрече, лариччен ларассине пĕлмерĕм, ларсассăн анас килмерĕ.



*Автомобиль.*

# Гг



гру-зо-вик

| | |
|---|---|
| брига́да | грузови́к |
| бригади́р | килогра́мм |

**Грузовик.**

Грузовик çине тавар нумай тиеме пулать. Халĕ колхозсенче те грузовиксем пур.

Пирĕн колхоз кăçал çĕнĕ грузовик туянчĕ. Халĕ пирĕн колхозра икĕ грузовик, пĕр автомобиль.





*Гг*

авто . ус    автомо . иль

*Грузовик-машина.*

# Жж



де-жур-нăй
жур-нал
э-та-жер-ка



## Дежурнăй.

Класра пирĕн дежурнăй пур. Вăл класри йĕркене асăрхать. Эпир ăна итлетпĕр. Вăл хушнине тăватпăр.

Черетпе эпир пурте дежурнăй пулатпăр. Класс доскине тасататпăр. Урок пĕтсен яланах форточка уçса хуратпăр.

Паян Павăл дежурнăй.

*Жж*

*Паян Павăл*
*дежурнăй.*



## Тăрăшса вĕренетпĕр.

Эпир шкула кун сиктермесĕр çӳретпĕр. Кĕнекесене, тетрадьсене тирпейлĕ тытатпăр. Уроксене яланах аван вĕренсе пыратпăр.

## Яланах асту.

Шкула таса, тирпейлĕ тумланса пыр.

Шкула урок пуçланиччен çит.

Звонок пулсанах класа ху вырăнна кĕрсе лар. Урок вăхăтĕнче учительтен ыйтмасăр класа кĕме те, класран тухма та юрамасть.

Учитель каласа ăнлантарнине лайăх итле. Вăл хушнине пурне те тĕплĕ, вăхăтра туса пыр.

## Пионер юрри.



Танкăр танкăртатрĕ
параппан сасси.
Ян-янах янрарĕ
пионер юрри.

# Цц



ре-во-лю́-ци
ци́ф-ра

## **Октябрь уявĕ.**

Октябрьти революци уявĕ çитрĕ. Урам тулли çын утать. Эпир те хĕрлĕ ялав илтĕмĕр те урама тухрăмăр. Юрăсем юрласа урам тăрăх утрăмăр.

Урамра ми́тинг пулчĕ. Унтан клуба кайрăмăр. Унта кино куртăмăр.

**Октябрьти революци сывă пултăр!**





. лав          . ăлтăр          . урла





## Владимир Ильич Ленин.

Владимир Ильич Ленин пĕтĕм ĕçхалăхĕн çулпуçĕ, аслă вĕрентекенĕ, çывăх тусĕ пулнă. Вăл ĕççыннисен пурăнăçне çăмăллатма тăрăшнă. Рабочипе хресчен ачисем аван пурăнччăр, пур ачасем те вĕренччĕр, тенĕ.

Эпир Ленин вĕрентнĕ пек пурăнатпăр. Ленин кăтартса хăварнине тăватпăр.





## Иосиф Виссарионович Сталин.

Сталин пĕтĕм ĕçхалăхне Ленин кăтартса хăварнă çулпа ертсе пырать.

Сталин—пĕтĕм ĕçхалăхĕн çулпуçĕ, вĕрентекенĕ. Сталина пĕтĕм тĕнче пĕлет. Ĕççыннисем Сталин юлташа чунтан юратаççĕ. Сталин—пирĕн юратнă атте, аслă çарпуçĕ.

Сывă пултăр Сталин юлташ!

*Сталин*



В. М. Молотов.



Н. М. Шверник.

## Хĕрӳллĕ ĕç.

Çĕршыв хĕрсе ĕçлет,
ĕçре çĕршыв вĕрет.
Мăн заводсем тăватпăр,
мăн çурт-йĕрсем лартатпăр.
Ĕçхалăхĕ ĕçре,
пур çамрăк вĕренӳре.

## Савăнăçлă пурăнăç.

Хĕпĕртесе, савăнса пурăнатпăр эпир, Совет çĕршывĕнчи ачасем.

Кам пирĕн пурăнăça савăнăçлă турĕ?

Пирĕн çĕршыва кам телейлĕ турĕ?

Большевиксен партийĕ—Ленинпа Сталин партийĕ.



## Совет Çарĕ—пирĕн вăй.

Германи мул хуçийĕсем пире хăйсен чури тăвасшăн пулчĕç. Вĕсем пире хирĕç вăрçă пуçласа ячĕç.

Анчах пирĕн çар тăван çĕршыва тăшман аллине памарĕ. Вăл Гитлер çарне çĕмĕрсе тăкрĕ. Унтан Япони çарне парăнтарчĕ.

Совет çарне пĕтĕм халăх пулăшса тăчĕ.

### Пĕл.



Ăна пурте пĕлеççĕ:
çĕлĕк çинче çăлтăр пур,
хăйпе пĕрле пăшалĕ.
Тăшмана вăл тĕл перет.



## Пограничник.

Сивĕ хĕл. Тĕттĕм каç.
Сас-чĕв çук таврара.
Пограни́чник тăрать
хуралта.
Унăн витĕр кураççĕ
куçĕсем тăшмана.

Кунĕн-çĕрĕн тăрать вăл
Тăван çĕршыв чиккинче.
Шанчăклă сыхлать вăл
пирĕн Совет çĕршывне.

**Эпир чура пулас çук.**
**Тăшман пире çĕнес çук.**

**Сывă пултăр Совет Çарĕ!**



# Ёё



| | |
|---|---|
| ёл-ка | пу-ле-мёт |
| лёт-чик | са-мо-лёт |

## Л ё т ч и к.



Костя шкулта питĕ тăрăшса вĕреннĕ. Вăл отличник пулнă. Переменăсенче Костя ытти ачасемпе пĕрле вăрçă вăййисем вылянă. Килте, уроксем вĕренсе хатĕрлесен, самолётсем тунă.

Костя лётчиксен шкулне вĕренме кĕнĕ. Халĕ вăл пысăк самолётпа вĕçет.

Костя — лётчик. Вăл тăван çĕршывăн тăшманĕсене хирĕç вирлĕн çапăçрĕ.








## Утлă çар.

Утлă çар сиккипе пырать. Çитсе çапрĕ вăл тăшмана. Касрĕ, вакларĕ, аркатрĕ. Хĕрхенмест вăл тăшмана.

Вутран вĕри казаксен лашисем. Ут ури айĕнче юр ирĕлет. Çивчĕ хĕççем йăлтăртатаççĕ. Утлă çара Сталин юлташ мухтарĕ. Вĕсен ялавĕ çинче Ленин сăнĕ.

шоф . р пулем . т





л . тчик самол . т миним . т



# Щщ

щёт-ка | плащ

## Тухтăр пăхни.



Шкулта пире тухтăр пăхрĕ. Вăл манăн кăкăра итлерĕ. Куçа тата шăла-çăвара пăхрĕ.

—Сывă! Анчах шăла таса тытмалла. Кашни кун ирхине тата каçхине шăла щёткăпа тасатмалла,—терĕ.

Апат çинĕ хыççăн эпĕ халь яланах шăла таса шывпа чӳхетĕп. Ирхине шăла щёткăпа тасататăп.

**Таса пурăн—сывлăхлă пулăн.**
**Совет Çарне юрăхлă пулăн!**






# Ъь

объ-яв-ле-ни

## Объявлени.

Пирĕн шкулта вĕренекен ачасен ашшĕ-амăшĕсен пухăвĕ пулчĕ. Пуху пуласси çинчен эпир атте-аннесене малтанах пĕлтертĕмĕр. Тата пирĕн учитель шкул умне объявлени çырса çапрĕ.

Пухăва аван пуçтарăнчĕç. Учитель шкул ĕçĕсем çинчен каларĕ. Тата Ваня ашшĕ съезда кайса килни çинчен каласа пачĕ.




съезд объявлени учитель
çемье октябрь учительница



## Тирпейлĕ пул.

Япала хăй тĕллĕн пулмасть вăл. Ăна тума вăй кирлĕ. Карандаша, тетраде, ручкăна, класс доскине, партăна, сĕтеле, кĕнекене, сумкăна тирпейлĕ тыт, ан çĕмĕр, ан варала, ан лӳчĕрке.

## Ванюк.



Пирĕн Ванюк пионер,
пур ачашăн вăл пример.
Ирех тăрать, тумланать,
тулта çӳрет, уçăлать.

Ирхи апат çиет те
шкула тухса уттарать.
Хут вулама вĕренет,
тĕрлĕ ĕçпе паллашать.

# АЛФАВИТ

Аа Ӑӑ Бб Вв Гг

*Аа Ӑӑ Бб Вв Гг*

Дд Ее Ёё Ӗӗ Жж Зз

*Дд Ее Ёё Ӗӗ Жж Зз*

Ии Йй Кк Лл Мм

*Ии Йй Кк Лл Мм*

Нн Оо Пп Рр Сс

*Нн Оо Пп Рр Сс*

Ҫҫ Тт Уу Ӳӳ Фф

*Ҫҫ Тт Уу Ӳӳ Фф*

Хх Цц Чч Шш Щщ

*Хх Цц Чч Шш Щщ*

ъ Ыы ь Ээ Юю Яя

*ъ Ыы ь Ээ Юю Яя*




## Октябрь ачисем.

Эх, хастарлăн-çке утатпăр
эпир, Октябрь ачисем.
Пит патмаррăн халь ÿсетпĕр
çĕнĕ пурăнăç калчисем.
Килĕр, килĕр, пурте килĕр
октябрятсен ĕретне!
Пурте хĕрлĕ çăлтăр илĕр!
Пурте килĕр вĕренме.

## Пирĕн çемье.



Манăн атте коммунист,
анне коммунистка.
Манăн пичче пионер,
аппа комсомолка.
Эпĕ октябрĕнок.

# Тарас мучи.

Колхозăн утарĕ пысăк. Утарта Тарас мучи пурăнать. Тарас мучи ватă пулсан та хыт ĕçлет. Хĕлле вăл çăпата тăвать, çăматă тĕпĕ хурать. Çулла хуртсене пăхать.

Пыл илнĕ вăхăтра Тарас мучи пире, ачасене, пыл çитерет.



### *Çырăр.*

*Ĕне сĕт парать.*
*Сурăх çăм парать.*
*Сысна аш парать.*
*Вĕлле хурчĕ пыл парать.*



### Сентти.

Чипер ача Сентти пур,
чупса çӳрет урамра.
Кĕвентине утланса,
ача вылять лашалла.

## Настюк.

Настюк шкултан вĕренсе киле таврăнна. Килĕнче аслашшĕ анчах пулна. Настюк сĕтел хушшине ларна. Вăл аслашшĕне кĕнеке вуласа пана. Унтан сăвă калана. Аслашшĕ ăна итлесе ларна.



## Ĕç эрни.

Эрнере çичĕ кун. Эпир ултă кун шкулта вĕренетпĕр. Пĕр кун килте канатпăр.

### *Кун ячĕсем.*

*Тунтикун. Ытларикун. Юнкун. Кĕçнерникун. Эрнекун. Шăматкун. Вырсарникун.*

## А л т ю к.

Алтюк ир те, каç та çăвăнать. Уйрăм алшăллипе шăлăнать.

Алтюк уйрăм чашăкран апат çиет. Апат çинĕ хыççăн вăл яланах çăварне чўхет



## Чĕрĕп.

Ачасем курăк çинче чĕрĕп тупнă. Вĕсем ăна киле илсе каясшăн пулнă. Анчах ăна ниепле те йăтма май пулман. Чĕрĕпĕн йĕпписем чикнĕ. Вара ачасем ăна кепка ăшне хунă та, шкула илсе пырса, чĕрчун кĕтессине янă. Вĕсем ăна апат тата шыв панă.



## Хурăн.

**Хурăн çулçи сарăлсан,**
**килет вăрман илемĕ.**
**Хурăн çулçи тăкăнсан,**
**каять вăрман илемĕ.**

## Кĕрхи вăрман.

Кĕркунне Миша ашшĕпе вăрмана кайнă. Вăрманта йывăç çулçисем те, курăксем те сарăхнă. Çырла, кăмпа, мăйăр, йĕкел—нимĕн те юлман. Кайăксен юрри те илтĕнмен.



Вĕсем ăшă енне, хĕл пулман çĕре, вĕçсе кайнă.

## Вĕçен кайăксем.



ч . . .



ç . . . .



. ăвакарчăн



кăси .



. лакурак



ч . . . .

## Нăрă.

Çулла эпир ачасемпе вăрмана кайрăмăр. Унта йывăç çулçисем, курăксем пухрăмăр. Лĕпĕшсем тытрăмăр. Пĕр шăрчăк тата нăрă тытрăмăр.

Нăрăпа шăрчăка коробка ăшне хутăмăр. Киле çитсен коробкăна уçса пăхрăмăр та, унта пĕр нăрă анчах юлнă. Шăрчăкăн пуçĕ тата çунатти юлашкисем çеç юлнă.

Шăрчăка нăрă çисе янă.



## Хурсем.

Хурсем шыв хĕррине аннă. Вĕсем шыва кĕрсен, шыв вĕсем патĕнчен, ункăн-ункăн хумханса, аяккалла кайнă. Кăштах вăхăт иртсен, шыв каллех яп-яка пулса тăнă.

Шывĕ тăп-тăрă пулнă.

## Кăвакал.

— Нарт-нарт
кăвакал,
ăçта каян, кăвакал?



— Шыв хĕррине каятăп.
— Шыв хĕрринче мĕскер пур?
— Унта манăн йăва пур?
— Сан йăвара мĕскер пур?
— Унта манăн чĕпсем пур.

## Кушак.

Кушак пӳрт тăррине улăхрĕ. Вăл урисене хутлатса выртрĕ те çывăрса кайрĕ. Пĕр çерçи вĕçсе пычĕ те ун патне ларчĕ.



— Ан лар унта, çерçи!

Темĕн курăн. Кушаксем пит чее вĕсем.

## Пĕл.



Мăр-мăр, çамки хăмăр, куçĕсем çутă, чĕрнисем çивĕч. Каç пулсан кайăка каять. Мĕн вăл?



## Шапасем.

Ачасем пĕве хĕрринче выляна. Вĕсем шапасем ларнине курна. Ачасем вĕтĕ чулсем пуçтарнă та шапасене чулпа пере пуçланă.

Пĕр шапи кăшт пуçне кăларчĕ, тет, те ачасене каларĕ, тет:

— Чарăнăр, ачасем, ан перĕр! Сире вăйă та, пире вилĕм,—терĕ, тет.

## Çуркунне.



Шăнкăртатса шыв юхать
çӳлĕ валак пуçĕнче.
Кĕмĕл пекех ялтăрать
шывĕ хĕвел çуттинче.



## Хураçка.

Пирĕн Хураçка ятлă пысăк йытă пур. Эпир ăна çунашкана кӳлсе çӳреме вĕрентрĕмĕр.

Пĕрре эпир, ачасем, Хураçкана кӳлтĕмĕр. Эпĕ çуни çине лартăм та: „Ну, атя, Хураçка, урамалла!“—тесе пушăпа çат! тутартăм.

Хураçка, çăтăр-çатăр тутарса, çунимĕнĕпе кĕлет айне кĕрех кайрĕ. Манăн пуçа кĕлет пĕрени çумне шан! тутарса хăварчĕ.

### П ĕ л.

Тимĕр йыттăн сӳс хӳре.



## Коля.

Коля пурăнакан яла нимĕçсем туртса илнĕ.

Анчах Совет Çарĕ нимĕç çарне çĕнтерсе çĕмĕрсе пынă.

Коля асламăшĕ патĕнче пурăннă. Вăл красноармеецсем ял патне çывăхарса пынине курнă.



Коля пÿртрен тухнă та красноармеецсене хирĕç чупнă.

— Малалла ан кайăр! Унта нимĕçсем пулемётсем лартнă! — тесе кăшкăрнă вăл.

Коля красноармеецсене пÿрт хыçĕсемпе илсе кайнă. Хăш пÿртре пулемётсем ларнине кăтартнă.

Пирĕн красноармеецсем нимĕçсемпе паттăррăн çапăçма тытăннă. Нимĕçсем, пулемётсене пăрахса, ялтан тухса тарнă.



## Поезд.

Поездпа эпир пыратпăр,
пит васкатпăр, пит васкатпăр.
Станцине ак çывхаратпăр,
станцине çитсе тăратпăр.
Анăр, камăн анмалла,
пирĕн инçе каймалла.

---

Поездпа çынсем те ларса çӳреççĕ, тавар та турттараççĕ.



## Пĕл.

Тимĕр çул тăрăх
хурçă ут чупать.
Мĕн вăл?



## Чĕкеçсем.

Пӳрт карнизĕ айĕнче чĕкеç йăви пулнă. Чĕкеçĕн сарă сăмсаллă чĕпписем йăвара пуçĕсене илемлĕн кăтартса ларнă.

Пĕрре пĕр чĕппи йăваран тухса ӳкнĕ. Чĕкеçсем ун тавра хурлăхлăн çуйăхса вĕçсе çӳренĕ.

Вăл вăхăтра Петя урампа иртсе пынă. Петя чĕкеç чĕппине илнĕ те йăвине хунă.

Чĕкеçсем савăнăçлăн чĕвĕлтетме пуçланă.

## Чĕкеç юрри.



Пĕчĕкçеççĕ питлĕ-куçлă,
эреветлĕ, теветлĕ.
Хӳри вĕçне туй килнĕ.
Якат Петĕр пăчăнтăр!

---

Шăнкăр-шăнкăр шыв юхать,
чĕкеç чĕппи шыв ĕçет.

## Кайăк ĕçĕ.



Тул çутăлнă вăхăтра
кайăк ĕçе тытăнать.
Кунĕпеле вăл ĕçлет,
чĕпписене çитерет.
Кăштах канма ларать те
юрă юрлать, савăнать.

## Мулкач çури.

Çулла пулнă. Çемен пичче колхоз хурĕсене пăхса çӳренĕ.

Сасартăк курăк хушшинче вăл темĕн мĕшĕлтетсе пынине курать. Çывăхарах пырса пăхать те



мулкач çурине курах каять. Çемен пичче ăна хăйĕн сăхманĕпе лап! витсе хурать.

Вара вăл мулкач çурине тытать те киле илсе килет.

## Сармантей.

Сармантейён сарă чăххи сарă çăмарта тунă, тет. Шăши чупса пынă, тет те, ăна хўрипе çапса çĕмĕрнĕ, тет.

Сармантей те йĕрет, тет, сарă чăххи те какалать, тет.

## Килти кайăксем.



. ăхă



. ур



. ăвакал



## Шăнкăрч.

Кунта, тăван çĕршыва,
килтĕм вĕçсе васкаса,
çуркуннене юратса,
юрла-юрла савăнса.

## Çамрăк паттăрсем.

Пĕр хулана нимĕçсем пырса кĕнĕ. Урам хушшинче нимĕç грузовикĕсем нумай пулнă. Вăл хула патне Совет Çарĕ çывăхарса пынă. Нимĕçсен тармалла пулнă. Çавна виссе, ачасем грузовиксен çăраççийĕсене илсе тарнă та пытарса хунă. Унччен те пулман, хулана Совет Çарĕ çитсе кĕнĕ.

Нимĕç салтакĕсем грузовиксем çине ларса тарасшăн пулнă. Анчах грузовиксене тапратса яма пултарайман. Вара нимĕçсем, машинăсене пăрахса, хуларан çуранах тухса тарнă. Нумайăшĕ тыткăна лекнĕ.





## Тӑвайкки ярӑнни.

Эх тӑвайкки, тӑвайкки,
мӗн чул ача ярӑнать!
Ҫуна, йӗлтӗр е коньки
тӑвайккине якатать.
Алӑсем шӑнса кӳтни
ачасене ним те мар.
Кулса кӑна ярӑнар.

## Урама чӗнни.

Атя, Ванюк, урама,
унта сана кӗтеҫҫӗ!
Миша, Анна, Хӗветле
вылямашкӑн чӗнеҫҫӗ.

## Вăрман касни.

Колхозниксем вăрмана кайрĕç. Вĕсем йывăç касаççĕ. Хыртан пĕрене тăваççĕ. Хурăнтан вутă татаççĕ.



## Хĕллехи каç.

Уйăх та çутă,
çăлтăр та нумай,
йăлтăр та ялтăр
йăлтăртатаççĕ.

Кăмака çине,
асатте патне,
йăпăр та япăр
хăпарса кайрăм.

Ак эп килелле
чупса килетĕп,
шăкăрт та шакăрт
пÿрте кĕретĕп.

— Ярсам, асатте,
халапна,—терĕм.
Мана асатте
часах итлерĕ.



— Пĕр халап ярап,
эс итле,—терĕ.



## Çарăк.

Пĕр старик çарăк акнă. Çарăкĕ тем пысăкăш пулнă. Старик çарăкне кăларма пынă. Туртать, туртать,—туртса кăлараймасть.

Старик хăйне пулăшма карчăкне чĕнет. Карчăкĕ стариккинчен, старикки çарăкĕнчен тытрĕç. Туртаççĕ, туртаççĕ,—туртса кăлараймаççĕ.

Карчăкĕ пĕчĕк Марука чĕнчĕ. Марук карчăкран, карчăк старикрен, старик çарăкĕнчен тытрĕç. Туртаççĕ, туртаççĕ,—туртса кăлараймаççĕ.

Пĕчĕк Марук йыттине чĕнчĕ. Йытă Марукран, Марук карчăкран, карчăк старикрен, старик çарăкĕнчен тытрĕç. Туртаççĕ, туртаççĕ,— туртса кăлараймаççĕ.

Йытă кушака чĕнсе пычĕ. Кушак йытăран, йытă Марукран, Марук карчăкран, карчăк старикрен, старик çарăкĕнчен тытрĕç. Туртаççĕ, туртаççĕ,—туртса кăлараймаççĕ.

Кушак шăшие чĕнсе пычĕ. Шăши кушакран, кушак йытăран, йытă Марукран, Марук карчăкран, карчăк старикрен, старик çарăкĕнчен тытрĕç. Туртрĕç, туртрĕç те çарăка туртса кăларчĕç.

---

*Хăй пӳртре, çивĕчĕ тулта.*
*Мĕн вăл?*



## Йӗр тӑрӑх.

Петя хӑйӗн аслашшӗпе пӗрле вӑрмана кайнӑ.



Юр тин ҫеҫ ҫунӑ.

—Петя, кунта нумай кайӑксем ҫӳреҫҫӗ-мӗн, — тет аслашшӗ. Петя пӑхать — нимӗнле кайӑк та курмасть.

— Асатте, кайӑксем ҫук-ҫке,— тет вӑл.

— Эпӗ йӗр тӑрӑх куратӑп,—тет аслашшӗ.—Акӑ кӗске хӳре сиксе кайнӑ. Акӑ тилӗ йӗрӗ. Акӑ кашкӑр ҫул урлӑ каҫса кайнӑ.

## Хӗллехи вӑрман.



Хӗлле кам пур вӑрманта? Тилӗ, кашкӑр, упа пур. Тата мулкач сиккелет.

## Пакша.

Хӗлле вӑрманта сивӗ. Йӗри-тавра юр. Пакшана йывӑҫ хӑвӑлӗнче ҫемҫе те ӑшӑ. Пакша тутӑ. Кӗркунне вӑл ҫимӗҫ нумай хатӗрленӗ.

Хӗлле вӑл мӑйӑр кышлать тата кӑмпа ҫиет.

Йывӑҫ хӑвӑлӗнчен тухса, туратсем тӑрӑх сиккелет те каллех хӑйӗн хӑвӑлне кӗрсе ларать.



Пакшана хӗлле аван. Пӗр кашкӑртан, тилӗрен тата кайӑкҫӑсенчен анчах хӑрать вӑл.

## Упапа старик.

Упапа старик туслашнӑ. Вӗсем иккӗшӗ пӗрле ҫарӑк акса тума шут тытнӑ.

Старик упана калать:

— Мана тымарри, сана тăрри пултăр,— тет.

— Юрĕ,— тет упа.

Акрĕç вĕсем çарăк.

Акă çарăкĕ пулса çитрĕ. Старик çарăкне илчĕ. Упана çеçки лекрĕ. Ӳпкелешрĕ упа, анчах ним тума та çук.

Тепĕр çулĕнче старик упана калать:

— Атя каллех иккĕн пĕрле акăпăр,— тет.

— Юрать,— тет упа.— Анчах эсĕ



халь тăррине ил, мана тымаррине пар,— тет.

— Юрĕ. Эсĕ каланă пек пултăр,— тет старик.

Акрĕç вĕсем тулă. Тулли питĕ аван пулнă. Старик тăррине илнĕ, упана хăмăлĕ лекнĕ.

Çавăнтан вара упапа старикĕн туслашу пĕтнĕ, тет.

---

## Упа.

Эпĕ упа—утаман,
ик урапа утакан,
пур кайăкран хытăрах
мĕкĕрттерсе улакан.

Çăва тухсан—вăрманта
вĕллесене ватакан,
тутлă пылне çиекен,
ĕнесене тытакан.



Хаяр сивĕрен хăраса,
хĕлĕпеле шăтăкра,
ура тупань çуласа,
вилнĕ пекех çывăратăп.

Çуркунне тин вăранап,
тинех çисе тăранап.
Вара сиксе ташлатăп,
йăкăш-якăш шăватăп.



## Юр кĕлетке.

Хĕл çитнĕ. Юр çуса лартнă. Çанталăк сивех пулман. Ачасем юртан çын кĕлетки тунă. Куçĕсене кăмрăкран тунă. Кĕлеткен аллисем те пулнă. Кĕлеткен аллине шăпăр тыттарнă.

# Ёлка.



Вăрман варринче пĕр пĕчĕк чăрăш ӳссе ларнă. Çамрăклах вăл сивве тӳснĕ. Çил-тăвăл та пайтах курнă.

Хĕлле чăрăша касса кайнă. Ăна шкула илсе пынă. Тĕрлĕ тĕслĕ хутсемпе илемлетсе ёлка тунă.

Ёлка тавра ачасем çавăрăнаççĕ, юрлаççĕ, алă çупса ташлаççĕ, илемлĕ сăвăсем калаççĕ.

---

*Хĕлле те, çулла та симĕс.*
*Мĕн вăл?*



## Пирĕн ёлка.



Пирĕн ёлка питĕ капăр,
симĕс, симĕс йĕпписем.
Çĕн çул касĕ савăнатпăр
эпир, çамрăк ачасем.
Ёлка, ёлка, эсĕ килтĕн
пысăк аслă вăрмантан.
Çĕн çул касĕ эсĕ çитрĕн,
пире саврăн кăмăлтан.

## Сталин ачисем.

Эпир Сталин ачисем,
çĕнĕ пурăнăç калчисем,
Пире лайăх çитĕнме,
пире лайăх вĕренме.

## Букварь вĕçĕ.

Халĕ эпир, ачасем,
хут вулама пĕлетпĕр.
Кирек мĕнле сăмаха
такăнмасăр вулатпăр,
çырасса та пит яка
пĕр йĕркепе çыратпăр.



Чувашская
Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького

Редактор *Ф. Шапошников.* Техредактор *Н. Степанов.*

НТ 00516. Подписано к печати 15. IV. 1949 г. Заказ № 2336.
Тираж 30.000 экз. Объем 6,25 п. л.

Типография № 1 Управления полиграфпромышленности
при Совете Министров Чувашской АССР.

*Гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5.*

K

Цена 2 руб.

А. Т. ТРОФИМОВ

БУКВАРЬ

На чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ • 1949